9806
КНИГОХРАНИЛИЩЕ

А. С. ПУШКИН

ПОЛТАВА

ЧӐВАШГОСИЗДАТ
Шупашкар * 1947

КНИГОХРАНИЛИЩЕ
СВЕРЕН
1959
17-91
59806

А. С. ПУШКИН

ПОЛТАВА

Петӗр Хусанкай
куҫарнӑ

Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

ЧӐВАШГОСИЗДАТ * ШУПАШКАР
1947

Вăрçа пуççапакан çынсем пекех,
Улмашлă вăрçă вăйĕпе мухтавĕ
Раççей патши енне куçать..

Байрон.

ХАЛАЛАНИ

Сана, анчах та тĕксĕм музăн
Сасси çитей-и сан патна?
Сăпайлă чунупа эс уççăн
Ман чĕрене чухлайăн-а?
Е эс поэт халалуне те,
Юратуне сивленĕ пек,
Кăмăлламастăн-ши халь ĕнтĕ,
Юпкурмăн, йышăнмăн-ши тек?

Эппин, тăнла тахçан ху савнă
Кĕвве-çемме эс, ңçмасса,
Тăнла та шан нихçан эп санăн
Сăнна асран кăлармасса.
Салхуллă та пĕччен шăпу сан,
Сан юлашки сăмахусем—
Ман мул, ман пирĕшти вăл, тусăм,
Ман чун юратăвĕ, пĕлсем.

ПĔРРЕМĔШ ЮРĂ

Пуян та чаплă Кочубей,[1]
Çаранĕсем ун аслă, капăр;
Унта ут-выльăх кĕтӳпе
Çӳрет ун ирĕк, çын пăхмасăр.
Мĕнпур Полтава тавринче
Пайтах ун ешĕл сатлă хутор,[2]
Тем чухлĕ пурлăх вĕсенче:
Тем тĕслĕ тир: сăсар, юс, хăнтăр;
Атласĕ, кĕмĕлĕ—мĕн çук-тăр,—
Куç умĕнче, кӳхрепсенче
Купаланса выртать сум-шутсăр.
Анчах çак Кочубей пуян
Тăсмак та лапсăркка çилхеллĕ
Утсемпе мар-мĕн, Крым тӳленĕ
Ылттăнпалан та мар, тахçан
Йăхран йăха тĕрекленен
Хуторсемпе те мар иккен:
Çук, хăйĕн хӳхĕм хĕрĕпе
Çĕрме пуян ват Кочубей,
Пĕр çавăнтан кĕтсе телей,
Вăл мухтанать тивĕçлипе.[3]

Чăнах та çав: Полтавăра
Çуках Мария пек чипер хĕр.
Вăл çуркунне юманлăхра
Тин çуралайнă çеçке евĕр.

Вăл Киев сăртĕнче ӳсен
Тирек пек тӳрĕ те чечен,
Яштак пӳ-силлĕ те кĕрнеклĕ,
Хускалкаларĕш ун илемлĕ:
Хăш чух вăл акăш пек юхать,
Хăш чух пăлан пек ыткăнать.
Кăкăрĕсем ун кăпăк шайлă.
Ун çӳллĕ шур çамки тавра
Сĕм пĕлĕт пек хура кăтра.
Ик куçĕ икĕ çăлтăр майлă;
Тути ун хĕрлĕ роза пек.
Анчах илем—шăнан чечек!
Пĕр уншăн çеç те мар Мариян
Ыр ячĕ кайнă таврана:
Кам пĕлекен çынсем ăна
Сăпай та ăслă хĕр шутланă.
Çавăнпалан Украйна та,
Раççей те халь ăна сĕнет
Чи лайăх йĕкĕчĕсене.
Анчах усал сăнчăрпа тан,
Марияшăн пулсан, венчет:
Каймасть пĕрне те. Ак кĕçех
Ярать хăй гетман евĕче.[4]

Вăл çуллă çын. Вăрçăпала та,
Ĕçпе-хĕлпе те хытнă ватă.
Анчах Мазепăн юн вĕри,
Каллех савать вăл çав тери.

Яш çын чĕри самантлăх тăрăх
Çунса сÿнет. Вăл юрататъ,
Писет те юрататъ татах,
Кунсеренех ун сисĕм урăх!
Ват çын чĕри ун евĕр мар:
Пит çăмăлах итлесшĕн мар вăл,
Çулланнăçем чулланнăскер—
Хыпса çунмасть вăл хăппăл-хаппăл;
Вăрах, тÿрккессĕн, ерипе
Хĕрет вăл çуйкăн хĕмĕпе;
Анчах ун юлашки кăварĕ
Вилсен кăна сÿнме пултарĕ.

Ту качаки чул хыçнелле
Тармасть шух ăмăрткайăкран:
Пĕччен пике кил пăлтăрне
Калла-малла анлатъ паян,
Чĕтрет, кĕтет хăй шăпине.

Çилли тулса çитнипелен
Тухатъ ун амăшĕ, чунхаллăн
Хĕрне тытатъ те аллинчен,
Пăшăрханса калатъ мăнтарăн:
„Ăнманнă! Намăссăр ватсупнă!
Чанах-и?.. Çук, эпир пур чух
Ку çылăха вăл тăвас çук.
Хреснай хĕрне—хăй тепĕр ашшĕ,
Тăванĕ пек пăхас чухне—

Вӑл—ӑссӑрскер, вӑл—хупланасшӗ!—
Каччa илме шутлать хӑйне".
Мария шарт сикет. Питне
Сасартӑк вилӗм сӑнӗ ҫапрӗ,
Вӑл вырӑнтан та хускалмарӗ,
Шанк хытрӗ, ӳкрӗ алкумне.

Тӑна кӗрейрӗ те, каллех
Куҫне вӑл хупрӗ—пӗр сӑмах
Чӗнмест. Хӗр ашшӗ-амӑшӗ
Ун чӗрине лӑплантарасшӑн,
Сиресшӗн хуйхине ӑшшӑн,
Пӑлхавлӑ шухӑшне чарасшӑн...
Ҫук, кӑлӑхах. Ик кун Мария—
Пӗр шӑппӑн макӑрса-йӗрсе,
Пӗр сасӑпах ӗсӗклесе—
Ӗшенчӗ; манчӗ ырӑ ыйӑх,
Ҫимерӗ те ӗҫмерӗ тек,
Сӑнран ӳксе вӑл мӗлкӗ пек
Сулланчӗ. Виҫҫӗмӗш кунне
Пушанчӗ хӗрӗн пӳлӗмӗ.

Хӑҫан, епле вӑл тарнине
Никам та пӗлекен пулман.
Пӗр пулӑҫ ҫех ҫав каҫхине
Ут тӑпӑртатнине, унтан
Хӗрпе казак калаҫнине
Илтсе-мӗн юлнӑ; ирпелен

Ҫаранлӑх сывлӑмӗ ҫинче
Тӑван мӑшӑр такан йӗрне
Курма пултарнӑ ҫӳрекен.

Тин сӑрнӑ мӑйӑх кӑна мар,
Яш каччӑн сар кӑтри ҫеҫ мар-мӗн:
Хӑш чух шур ҫӳҫлӗ ватӑ ар,
Ун пӗрмӗклӗ ҫамки те—хӗрӗн
Чун-чӗрине вут хыптарать,
Пур шухӑшне пӑхӑнтарать.

Час Кочубейӗн хӑлхине
Кӗрет хӑрушӑ ҫав хыпар:
Ун хӗрӗ маннӑ хӗрлӗхне,
Вӑл намӑса пӗлесшӗн мар,
Вӑл халь усал ытамӗнче!
Епле чӑтать-ши ҫуттӗнче?!
Тӗлӗннипе ӑнран каяҫҫӗ
Хӗр ашшӗ-амӑшӗ, хӑймаҫҫӗ
Шанмашкӑн пур мӑшкӑллӑха.
Тин чӑнлӑха вӗсем кураҫҫӗ,
Ӑша ҫунтармӗш чӑнлӑха.
Тин ҫамрӑк иртӗнчӗк чунне
Вӗсем ӑнланнӑ пек пулаҫҫӗ;
Тинех, тинех вӗсем чухлаҫҫӗ
Ма хӗр апла хӑтланнине:
Кил-терӗш йӑлинчен таратчӗ,
Ӑна вӑл сӑнчӑр пек куратчӗ;

Пăшăрханатчĕ вăрттăн тем,
Сывлатчĕ ассăн; каччăсем
Кăмăлласа сăмах хушсассăн—
Шăпах пулатчĕ вăл мăнаçлăн;
Кĕрекере, сĕтел тавра
Эрех чашлана вăхăтра,
Никам çине те вăл пăхмастчĕ,
Пĕр гетман сăмахне тăнлатчĕ;
Ялан ун юррине юрлатчĕ[5],
Леш чухăн, паллă мар чухне
Хывса хăварнă сăввине
Кĕвĕлесе вăл йăпанатчĕ;
Хĕрарăм чун-чĕмне пăхмасăр,
Саватчĕ утлă çар стройне.
Булавапа бунчуклă паттăр[6]
Малороссия хуçине,
Хавассăн кăшкăрса, литавр
Çапса, саламлани унне
Каятчĕ харсăр кăмăлне...

Пуян та чаплă Кочубей.
Ун тусĕ-йышĕ таврипех.
Вăл хăйĕн ыр ятне хăтарĕ,
Ăна вăл çиеле кăларĕ,
Полтавăна йăлт пăлхантарĕ.
Вăл тавăрĕ Мазепăна
Хăй килĕ-çурчĕ варринчех;
Алли чĕтремĕ ун, кĕçех

Чикме пултарĕ вăл ăна...
Анчах халь урăх ĕмĕтпе-мĕн
Чĕри вăркать ват Кочубейĕн.

Пăтравлă пулнă самана.
Унчух Россия, çамрăкскер,
Вăрçа-харçа вăраннăскер,
Тармаклана-тармаклана
Мăн Петĕр ăсĕпе вăй илнĕ.
Ана чапа вĕрентекен
Йăваш пулман: швед паладинĕ,
Кĕтмен çĕртен, ун чĕринчен
Юн тăкнă темиçе хутчен.
Анчах, инкек çине синкек
Тӳсе-тӳсе, вăрахăн тек
Вăй хушнă Русь, ӳссе вăл çитнĕ.
Сулмаклă мăлатук çапла,
Кĕленчене ватать пулин те,
Хурçа туптать—тăвать пăлат*.

Ним уссăр чаплăхпа мăнланнă
Хăюллă Карл шуса çывхарнă
Пĕр тĕпсĕр тамăк хĕррине.
Вăл авалхи Мускавалла
Çул тытнă; вырăссен çарне
Чăл-пар салатнă тавралла.
Вăр-çаврăçил çĕре тусать,

* Пăлат—булат, кинжал евĕрлĕ вăрăм çĕçĕ

Тусанлă куракă таять.
Çак çавраçил пекех-мĕн Карл та
Мускав енне шуса çывхарнă.
Çав çул çинех халь хăй йĕрне
Хăватлă çĕн тăшман хăварчĕ.
Эпир астăвасса, чапне
Пуçиллĕн çухатса, вăл тарчĕ[7].

Украйна шăппăн çеç пăлханнă.
Сӳнмен хĕлхем тахçан иккен
Вăрахăн, вăрттăн амаланнă.
Аваллăх юнлă кунĕсен
Хистевлĕ, чăрсăр тусĕсем
Васкатнă халăх вăрçине;
Вĕсем каппайнă, ӳпкеленĕ,
Кăтартнă гетманĕ çине:
Килĕшĕве пĕтертĕр, тенĕ,
Россияран вăл тухтăр кĕç.
А Карлĕ кĕтнĕ çавна çеç.
Мазепа хăлхинче янранă
Пăлхав сасси: çитет пире!
Анчах ват гетман тĕрĕс ларнă,
Итленĕ Аслă Петĕре.
Яланхи пек хатарлă, хытă,—
Украйнăна вăл лăпкăн тытнă;
Çын сăмахне итлемен пек
Вăл ĕçнĕ-çинĕ тӳп-тӳлек.

„Мĕн гетман?—çамрăксем пупленĕ,—
Вăл ваталнă, вăл сĕврĕлнĕ;
Кунсем-çулсем, ĕçсем сӳнтернĕ
Ун ĕлĕкхи хĕрӳлĕхне.
Ма вăл чĕтревлĕ алăпа
Тытать çаплах булавине?!
Çапасчĕ пирĕн вăрçăпа
Çав курайман Мускав çине![8]
Пулсанччĕ ватă Дорошенков
Е çамрăк Самойлович[9], е
Палейĕмĕр[10], е Гардеенко"[11]
Çара илсенччĕ аллине,—
Вара ютри кĕрт-юр ăшне
Пуç хумĕччĕçĕ казаксем,
Украйна ывăлĕсене
Хăтарĕччĕç çав маттурсем[12]".

Çапла çунса ӳпкевлĕн, шухă
Яш-кĕрĕм сарнă ирĕк шухăш.
Çĕршывĕн тыткăнне, Богданăн
Телейлĕ тав-шавне манса,
Ун килĕшĕвĕпе таса
Вăрçисене тек астуманăн,
Аслашшĕсен ятне ярса,
Хăрушă улăшăнусем
Кĕтсе шуйхашнă яш-кĕрĕм.
Анчах ват çын пит асăрхавлă—
Хуллен çӳрет, иккĕленет.

Мĕнрен мĕскер килмеллине
Татса хумасть сасартăках вăл.
Кам асĕ пăрпалан хупланнă
Çĕм тарăн тинĕс авăрне?
Кам ăсĕ пĕлĕ, кам ăнланĕ
Хура чĕреллĕ çын чунне?
Унта—пусарнă çуйкăнсен
Мĕлки пек шухăшсем хуллен
Иăшăлтатаççĕ пулĕ, тен.
Тен, тахçанхи пĕччен ĕмĕт
Унта халь шăппăн çитĕнет.
Ăçтан пĕлес? Анчах Мазепа,
Çилли тулса кĕвĕлнĕçем,
Чее чĕри тек суйнăçем,
Пăхмашкăн асăрхавсăр пек вăл,
Çынпа хăй уçă та çемçе.
Епле ăста пĕлет хăй майлăн
Çын чĕрине вăл çавăрма,
Çын ăспуçне пăхăнтармашкăн,
Ют вăрттăна курса тăма!
Епле юри вăл, шанвă пек,
Кĕрекере яшшар чĕлхеллĕн
Пакăлтататъ ватăсемпе—
Ĕлĕкхине чунтан хĕрхеннĕм!
Ирĕклĕхе саваканпа
Ирĕклĕхе мухтать вăл таилăи,
Влаç йĕркине ятлаканпа

Влаçа хăртса тăкать мăнаçлăн;
Çиллес çынпа куççуль тăкать,
Айван умне ăсне сарать!
Тен, пит сахалăшĕ пĕлеççĕ
Вăл лăпланусăр чунлине,
Хăйпе тăшманлă çынсене
Тӳр кăмăллăн та е суеççĕн
Сăтăрлама хавассине.
Нимле кӳренĕве нихçан та
Манман вăл ĕмĕр тăршшĕпе.
Инçе-инçе мăнаçлă вата
Кармашнă сăтăрлăхĕпе.
Çук уншăн нимĕнле тасалăх,
Çын ырлăхне вăл астумасть,
Нимĕскере те юратмасть,
Юна шыв пек тăкма хавас вăл;
Вăл—ирĕклĕх тăшманĕ; çук
Тăван çĕршывĕ ун кучух.

Тахçантанпах синкерлĕ шухăш
Ӳстернĕ вăрттăн ват усал.
Анчах çав шухăш пулнă тупăш
Пĕр çивчĕ тăшманла куçа.
„Чим, выçă кашкăр, чим, пĕтермĕш!—
Тет Кочубей, хăйрать шăлне:
Сан çурт-йĕрне эп вут тĕрттермĕп,
Эп тивмĕп хĕрĕм тĕрмине;
Кĕлленмĕн çулăм варриче,

Казакăн хĕçĕнчен тĕп пулмăн.
Мускав палачĕн аллинче
Ху айăпна эс кăлăх тунăн:
Хăрушă дыба çийĕнче
Турткалашса та карăнса,
Юн юхтарса, асапланса,
Ылханăн эсĕ виличчен
Ман хĕрĕме тĕне кĕртсе
Манпа кумлашнă сехетне;
Ылханăн ман кĕрекене,
Хăвна тавпа хисеплесе
Тулли курка эп сĕннине;
Ылханăн эсĕ, ват хĕрен,
Çан кăвакарчăн пек хĕре
Сăхса амантнă сĕм çĕре!..“

Çапла! Мазепа Кочубейĕн
Чăн тусĕ пулнă çавăн чух.
Çăкри-тăварĕ евĕрлех-мĕн
Пĕрлешнĕ çакă икĕ чун.
Час-час вĕсем вут-çулăм витĕр
Кĕр-шавлă вăрçă хирĕпе
Юнашарах кустарнă шиксĕр,
Уллах çĕрте пĕр-пĕринпе
Вăрах калаçнă икĕ ар.
Пытанчăк гетман, уççăн мар,
Пăртак кăна сирсе—тусне

Кăтартнă антăхлă чунне:
Малашнехи улшăнусем,
Килĕшӳсем, пăлханусем
Пирки пуплен̆ĕ вăл тĕтреллĕн.
Çапла, унчух ват Кочубейĕн
Чĕри тапатчĕ гетман май.
Анчах, тӳсме çук çилĕпе
Хаярланса, вăл ерипе
Пултарчĕ халь йăлт улшăнма.
Пĕр шухăш ваттăн кунĕн-çĕрĕн,
Пĕр вĕчĕх çунтарать ăна:
Е хăй пĕтет, е тăшмана
Пĕтерĕ мăшкăлланнă хĕршĕн.

Анчах пит тарăн вăл пытарнă
Хаярлăхне хăй чĕринче.
„Халь кулянса вăл шухăшланă
Ялан хăй вилĕмĕ çинчен.
Мазепана усал сунмасть вăл;
Пур айăпĕ те хĕрĕнче.
Тăван хĕрне те каçарать вăл:
Ӳкĕнтĕрех тур умĕнче—
çĕрти-çӳлти йăласене
Йăлтах манса хăй килйышне
Намăслантарнăскер...“

Анчах

Çав вăхăтрах ват Кочубей
Хăй ăмăрткайăк куçĕпе

Хăюллă, шанчăклă, пуçтах,
Сăмах тытма пултаракан
Çынсем шырать тусран-йышран.
Пĕлтерчĕ хăйĕн арăмне:[13]
Тахçантанпах вăл пĕр пĕччен
Хаяр çыру çырать иккен;
Ун арăмĕ, хăй çиллине
Шăнараймасăр, тӳсеймесĕр,
Хистет те васкатать ăна;
Тӳшек çинче те вăл тӳлек çĕр
Пăшăлтатать, ăса-тăна
Синкерлĕх пирĕштийĕ пек
Вĕçĕхтерет, хавхалатать,
Упкелешет куççулĕпе,
Хăйне тупа тума хушать;
Унтах салхуллă Кочубей
Тупа тăвать, сăмах парать.

Ĕç тапранать. Кочубейпе
Хăюллă Искра[14] пĕр каварлă.
„Çĕнетпĕр,—теççĕ иккĕш те,—
Тăшманăн пĕтмеллех. Ку паллă.
Анчах кам халĕ, шикленмесĕр,
Пур халăх ырлăхшĕн тăрса,
Хăватлă усала хăртса
Тĕп тумалли çав доноса
Тахçан асăрхаттарнă Петĕр
Ури умне хума пĕлейтĕр?“

59806

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

Телейсĕр хĕр кăмăлламасăр
Сивленĕ яш казаксенчен
Пĕри ăна, ытараймасăр,
Ачаранпах юратнă-мĕн.
Каç кӳлĕм те, ирпе ирех те
Тăван шыв-шурĕ хĕрринче,
Черешня сулхăнлăхĕнче
Чипер Марияна вăл кĕтнĕ;
Кĕте-кĕтех вăл асапланнă,
Кăшт çеç курсан та хавасланнă;
Хăюсăр савнă вăл хĕре,
Хăйне савассине шанман,
Тархасласа йăлăхтарман:
Хăранă вăл пистересрен,
Писсен—хăй кĕреччĕ çĕре.
Хĕр кил-çуртне пĕр ушкăн каччă
Евчисемпе пырса çитсен—
Салхуллăн, тăлăххăн, пĕччен
Аяккалла вăл пăрăнсаччĕ.
Сасартăк пĕтĕм казаксем
Мариян мăшкăлне пĕлсессĕн,
Ним хĕрхенмесĕр çамрăксем
Хĕртен кулса йĕкĕлтесессĕн—
Ку яш унчух та шарламан,
Марияная ытарайман.
Анчах, юри те мар—нехеклĕн,
Ун умĕнче пĕри-пĕри

Мазепана аса илсессĕн—
Вăл пăшăрханнă çав тери:
Сăнран ӳксе, куçĕпеле
Тинкернĕ шăппăн çĕрелле.

Кам уйăх-çăлтăр çуттипе
Утпа пырать ши çĕрепе?
Кам учĕ, ывăнма пĕлмесĕр,
Çеçенхирпе юртать пĕр вĕçсĕр?

Казак каять çурçĕрелле,
Канасшăн мар вăл нимĕнле
Уйра-хирте те, вăрманта та,
Тискер шыв-шурлă çыранта та.

Çиçет ун хĕçĕ кĕленчен,
Янрать ун енчĕк хĕвĕнче.
Пуçне ухса чупать ун харсăр,
Тĕреклĕ учĕ, такăнмасăр.

Укçа кирлех çул каяна,
Пăлат хĕç—йăпану ăна,
Çĕмрен пек ут та—йăпанушăн,
Нимрен хакли—калпакĕ уншăн.

Калпакшăн парĕ вăл хĕçне,
Утне те ылттăн енчĕкне.
Вăл уншăн çапăçса хĕн курĕ,
Вăл уншăн хăй пуçне те хурĕ.

Ма хаклă çав калпак ăна?
Унта мĕн Петĕр патшана
Кочубейрен донос çĕленнĕ,
Çав хут Мазепана питленĕ.

Капланакан аслатие
Сисмесĕр, гетман пит чее
Туса пырать хăй ĕç-хĕлне.
Унпа пĕрле пĕр езуит,[15]
Ăна ним мар чăнни-суйи,
Вăл палăртать пăлхав кунне,
Вăл хĕтĕртет Мазепана:
„Патша пулатăн...“ тет ăна.
Сĕм каçсенче вăр-хурахла
Вĕсем хĕрсе каварлашаççĕ,
Хакласçĕ вăрттăн ултава,
Секретлă манифест[16] çыраççĕ,
Патша пуçне вĕсем сутаççĕ,
Вассалĕсен* туписене
Улăштарса сутса тăраççĕ.
Çӳре пуçларĕ кермене
Таçтан темле ыйткалакан:
Хăй Орлик[17]—шанчăклă тиек—
Ăна илсе кĕрет, унтан
Вăл ăсатса ярать хăех.
Пур таврана наркăмăшпа
Тĕтреççĕ гетман тарçисем:

* Вассал—пăхăнса пурăнакан пуçлăх е çĕршыв.

Казаксене Булавинпа[18]
Çěклеççě Дон çинче вěсем;
Крым ордине хаярлатаççě,
Лăп Днепр леш енчи пуçтах,
Чарусăр ушкăна часрах
Măн Петěр влаçěпе юнаççě.
Мазепа халь енчен-енне
Куç ывăтать, йěри-тавра
Çыру çине çыру ярать:
Кěç, хăратса, Мускав çине
Бахчисарай çарне çěклет;
Варшавăра ăна итлет
Король, Очаковра—паша,
Итлеççě Карлпа патша.
Самант та тěлěрмест ун чунě:
Чеен, ултавлăн йěркипе,
Пěр шухăш хыççăн теприпе
Хăй ěмěтне вăл çěрěн-кунěн
Çывăхлатса сарса пырать,
Тискер ěçин мелне шайлать;
Ун кăмалě çаплах хаяр,
Сÿнми çунать усал кăвар!

Анчах епле чěвен тăрса
Вăл çулăмланчě, хыпăнчě,
Сасартăках хăй умěнче
Кěмсěртетсе аçа çапсан!
Чи аслă вырăс улпучěсем[19]

Патша çывăхĕнчи çынсем,
Россия тăшманне шанса,
Полтава çырнă доноса
Ăна хăйне ярса параççĕ;
Ятлас чухне ăна, савса,
Пĕр айăпсăр тесе шутлаççĕ.
Вăрçăпала чăрманнипе,
Çыру элеклĕ тенипе,
Ăна пăхма та йĕрĕнсе,
Патша хăех Иудана
Лăплантарать-мĕн хĕрхенсе,
Ачашшăн йăпатать ăна;
Пур усала вăрахлăхах
Вăл пусарма парать сăмах!

Мазепа, çав тери кӳреннĕн,
Патша патне çырать тӳлеккĕн.
„Пĕлет пĕр турă, сутт ĕнче,
Курса тăраççĕ пур енчен:
Вăл, мĕскĕн гетман, тӳрĕ чун,
Ĕçлет патшашăн çирĕм çул;
Патша тивлечĕпе вышкайсăр
Çӳле çĕкленнĕ вăл...Ах, ăссăр,
Ах, суккăр-çке çав çын усалĕ!..
Е халь, çĕре кĕрес чухне,
Вăл, гетман, чун сутса улталĕ,
Е ярĕ хăйĕн ыр ятне?
Вăл мар-и, пулăшу памасăр,

Пистервеччĕ Станислава?[20]
Украйна патшине лармасăр,
Намăсланса, пур çырава,
Пур вăрттăн килĕшӳсене
Вăл мар-и-ха çав çулхине
Ярсаччĕ Петĕр аллине?
Вăл мар-и итлемерĕ ханăн[21]
Тата çав Стамбулри султанăн
Вăскăртуне? Пур кăмăлран
Ку таранччен вăл шур патшăн
Хаяр тăшманĕсемпеле
Ăспа-халпа та хĕçпеле
Хавасчĕ çапăçма ялан.
А халь? Ун шурă çӳçĕпе
Шур майăхне сума сумасăр,
Мăшкăллама хăять масасăр!
Кам халĕ? Искра, Кочубей!
Хăçантанпа ун тусĕсемччĕ!.."
Юн антăхан тилмĕрӳпе.
Сип-сивĕ чăрсăрлăхĕпе
Вĕлерттерме вăл вĕсене
Ыйтса çырать патша патне...[22]

Кама вĕлерттерме?.. Ват харсăр!
А кам хĕрне вăл ыталать?
Чĕре ӳпкелĕшне пăхмасăр,
Хăй кăмăлне вăл хытарать.
Вăл шухăшлать: „Ма çыхланать

Чухлавсăрскер вăйлисемпе?
Каппайчăк ирĕклĕхĕпе
Хăйнех-çке пуртă вăл хăйрать.
Куçне хупса ăçтаваскать-ши?
Мĕне шанса вăл хăтланать-ши?
Е хĕрĕн савăшне...анчах
Вăл ашшĕне çăлас çуках.
Епле савсан та эп ăна,
Савни пуç тайĕ гетмана,
А унсăр—тăкĕç ман юна".

Мария, мĕскĕн чун Мария,
Черкас тавращĕнчи чипер
Пикесенчен чи чиперрийĕ!
Пĕлместĕн эс, телейсĕрскер,
Мĕнле хăрушă çĕлене
Ху хĕвӳнте ăшăтнине!
Мĕнле ăнланайми вăй-халлăн
Çав каскăн чун, çав вата аскăн
Сана туртать-ши хăй патне?
Кама эс пултăн-ши парне?
Ун кăтраланнă шурă çӳçĕ,
Ун пĕркеленчĕк сăнĕ-пуçĕ,
Ун çиçкĕн, путнă куçĕсем,
Ун илĕртен сăмахĕсем—
Нимрен, нимрен те хаклă саншăн:
Эс уншăн мантăн аннӳне.
Сăхланчăк ар çумне выртасшăн

Пăрахрăн эс аçун килне.
Асамлă, витĕр куçĕпе
Старик юмланă сан ăсна;
Çемçе, тӳлек пуплевĕпе
Йăлтах çывратнă вăл ăна.
Эс ун çине, кĕлтунă пек,
Курми куçусемпе пăхатăн,
Каçса кайсах ăна саватăн,
Сисместĕн мăшкăла та тек:
Çук, мăшкăл кăмăллă сана,
Хĕрлĕхӳпе мухтаннăнах
Унпа эс халĕ мухтанатăн;
Арçынпала юсăлсанах—
Çухатрăн намăсна та, мантăн...

Мĕн намăс—танлă пикене?
Мĕнех сăмах вăл, çын хахачĕ?
Халь унăн чĕркуççи умне
Мăнаçлă ватă пуç таять-çке!
Ун çумĕнче канать-çке гетман
Ĕçрен-хĕлрен, пур шăв-шавран;
Синкерлĕ шухăшне унран
Пытараймасть, калать вăрттăн.
Хĕр чухнехи кунĕсене
Мария хĕрхенмест; чунне
Пĕр хурлăх çеç хуплать унне,
Сĕм пĕлĕт евĕр, хăш чухне:
Ун умĕнче мĕлкĕшленеççĕ

Салхуллă ашшĕ-амăшĕ;
Ача-пăчасăр, иккĕшех
Ватта супса, ÿпкелешеççĕ.
Куççулĕ витĕр çав сасса
Илтет Мария хурланса.
Пĕлсенччĕ вăл Украйнăра
Пур халăх пĕлнине пăртакçĕ!
Анчах унтан-ха пытараççĕ
Сехре хăппиллĕ хыпара.

ИККĔМĔШ ЮРĂ

Мазепа сĕм салху. Пĕр каскăн,
Чĕресĕр ĕмĕт унăнне
Иментерет ăсне-тăнне,
Мария çепĕççĕн, ачашшăн
Пăхать хăй старикки çине.
Чĕркуççинчен ыталаса
Вăл ăшă сăмахсем калать.
Хура шухăшсене çав сас
Сирес çуках аяккалла.
Хĕр умĕнче Мазепа сиввĕн
Аялалла пăхса ларать.
Хăйне савса ÿпкеленишĕн
Çăвар уçса та шарламасть.
Хĕр тĕлĕнсе, тăвалланса,
Аран çеç сывлăш çавăрса,
Тăрать, калать вăл кÿренÿллĕн:

„Итле-ха, гетман: саншăн эп
Суттĕнчере пурне те мантăм;
Ĕмĕрлĕхех пĕрре юратрăм,
Санран та пĕр çавна кĕтеп.
Эп çав эс сĕннĕ юратушăн
Пĕтертĕм хамăн тивлете;
Анчах эп ӳкĕнместĕп уншăн,
Мана шел мар тек нимĕн те.
Эс астăватни: çав хăрушă,
Çав шăпăрт сассăр каç, сана
Эп парăнсассăн кăмăлушăн,
Тупа тусаттăн эс мана,
Эс юратма сăмах парсаттăн.
Мĕскершĕн халĕ юратмастăн?“

МАЗЕПА

„Ахаль иккĕленен эс, тусăм.
Айван шухăшсене пăрах;
Мана шанманнипе, пĕр уссăр
Ху чĕрӳне çуран таках.
Çук, сан вĕри чунна, куратăп,
Юн выляса пăлхантарать.
Мария, шан: хам чапăмран та
Сана эп ытларах саватăп,
Хам влаçăмран та хытăрах.

МАРИЯ

Суятăн: чеепе калан.
Тин мари-ха эс шав манпаччĕ?
Халь пăрăнатăн ак манран,
Сана ман савăш йалăхтарчĕ.
Эс кунĕ-кунĕпе кучух
Старшинасен тавращĕнче,
Е ĕçкĕре, е çул çинче,
Эп санăн асăнта та çук.
Час-час эс çĕрĕпех печчен,
Е кĕлĕмçĕ ыйткалакан,
Е езуит халь санпалан.
Хăвна савса чĕнме хăйсассăн —
Мана эс сиввĕн çеç пăхатăн.
Нумай пулмасть, пĕлетĕп эп,
Эс Дульскаяна тав туса
Курка çĕкленĕ. Кам вăл сан —
Çав Дульская?

МАЗЕПА

Ав мĕн илтеп.
Эппин эс кӳлешме пикентĕн?
Е ватăлмалăх кунăмра
Эп çав мăнкăмăллă пикенĕн
Нĕрне сăхланăп-ши вара?
Е ман, старикĕн, çăмăлçах
Яш-кĕрĕм пек сывлас-и ассăн?

Е, намăс-симĕсе мансах,
Арăмсемпе курнăçланас ман?

МАРИЯ

Çук, ан вăлтсам, кала эс тӳрĕ,
Ан пытарсам манран халь тин.

МАЗЕПА

Сан канăçу—ман канăç. Юрĕ:
Пĕлсем, Мария, пĕл эппин.

Тахçантанпах эпир пĕр ĕç
Хускатнă; вăл вĕрет ку тапхăр.
Çывхарчĕ меллĕ вăхăт: кĕç
Хăватлă кĕрешӳ пуçлатпăр.
Пайтах хĕстерĕнтĕмĕр чапсăр,
Пайтах çын куçĕнчен пăхатпăр,
Пуçа пĕкетпĕр ют умне:
Е Варшава тупа тăватпăр,
Е çав Мускавăн ĕмпӳне.
Анчах Украйнăн хăй патшалăх
Пулмашкăн вăхăт кучухне:
Эп Петĕре юнпа вармалăх
Çĕклетĕп ирĕк ялавне.
Йăлт хатĕр: ик королĕ те
Манпа пĕр каварта; пур тарăх,
Пур вăрçă-харçă хыççăн, тен,
Эп патшана ларма пултарăп.

Туссем шанчăклисем пур ман:
Княгиня Дульская, тата
Çав езуит, ыйткалакан
Вĕçлеççĕ ман ĕçе йăлтах.
Ман патăма халь вĕсен урлă
Килсе тăраççĕ корольсен
Хушăвĕсем, çырăвĕсем.
Ак ман сана калассисем.
Чуну ĕнтĕ лăпланчĕ-и?
Шухăшусем саланчĕç-и?

МАРИЯ

Ах, савнă тусăм, эс кĕçех
Тăван çĕршыв патши пулатăн!
Епле килĕшмелле халь санăн
Шур кăтруна патша калпакĕ!

МАЗЕПА

Тăхта-ха, ĕç пĕтмен. Пăлхатĕ
Хаяр çил-тăвăл тĕнчене.
Кам пĕлĕ мĕн пулассине?

МАРИЯ

Сан çумăнта эп хăрамастăп—
Хăватлă эс! Пĕлетĕп эп:
Сана халь трон, престол кĕтет.

МАЗЕПА

Ӗнчен... каска кӗтет пулсассӑн?

МАРИЯ

Алла пулсан—каска çине
Санпа пӗрлех пуçа эп хурӑп.
Епле-ха сансӑр тӑрса юлӑп?
Анчах çук, çук: эс влаç сынни.

МАЗЕПА

Мана пит юрататни эсӗ?

МАРИЯ

Сана эп! Юрататӑп çеç-и?

МАЗЕПА

Кала: аçу е упӑшку
Сана халь хаклӑрах?

МАРИЯ

Мӗн ку
Ах, савнӑ тусӑм, ахалех
Апла ыйтса чуна хускатрӑн.
Эп хам килйышӑма манасшӑн,
Ӑна эп кӳтӗм намӑс çех.
Тен, халь (хӑрушӑ каламашкӑн!)
Ылханчӗ пуль мана атте.
Ку камшӑн-ха?!!

МАЗЕПА

Апла эп саншăн
Ху аçунтан та хаклă, тен?
Чĕнместĕн...

МАРИЯ

Турăçăм!

МАЗЕПА

Кала.

МАРИЯ

Хăвах чухла.

МАЗЕПА

Итле апла:
Мана е аçуна, теес,
Иксĕмĕртен пĕрне пире
Пĕтермеллех тусан, ху эс
Сутйе пулсассăн çав ĕçре —
Хăшне эс пĕтерттерĕттĕн?
Хăшин хутне эс кĕрĕттĕн?

МАРИЯ

Ах, çитĕ! Ан пăлхат мана.
Вăлтатăн эс.

МАЗЕПА

Кала çакна!

МАРИЯ

Сăнран эс кайрăн. Калаçатăн
Темле шултран... Ан çиленсем!
Йăлтах, пурне те эпĕ санăн
Памашкăн хатĕр, ĕненсем.
Анчах хăратăп çав тери эп
Илтме кун пек сăмахсене.
Çитет.

МАЗЕПА

Ан ман эппин, Мария,
Паян мана мĕн тенине.

Украйна касĕ тӳп-тӳлек.
Тӳпе тăп-тăрă. Тĕлкĕшеççĕ
Çут çăлтăрсем. Тĕлленнĕ пек
Канать лĕп сывлăш. Кăшт чĕтреççĕ
Çуткам тирекĕн çулçисем.
Сар уйăх лăпкăн çутатать
Шур-Чиркӳри пур хуралта,
Ĕлккем те чаплă гетмансен
Ем-ешĕл сат-пахчисене,
Тата пĕр кивĕ кермене.
Йĕри-тавра пĕр сас та çук;

Анчах çав ватăлнă керменĕн
Пĕр пашнинче такам хăшчух
Пăшăрханать, вĕчĕрхенет мĕн:
Ку—ватă Кочубей сĕм таран
Шухăшсемпе асапланать,
Сăнчăрланса вăл кантăк айĕн
Пĕлĕтелле пăхса ларать.

Ыран касаççĕ ун пуçне.
Анчах вăл шикленмест хăрушă
Вилĕмĕнчен. Хăй пурнăçне
Вăл хĕрхенмест. Мĕн вилĕм уншăн?
Тахçан кĕтейнĕ ыйхă çех.
Вăл хатĕр тупăка выртмашкăн.
Çыврас килет. Анчах тăшманăн
Ури умне, чĕлхесĕр пек,
Сăмах чĕнмесĕр йăванмашкăн,
Патша хушнипеле патшан
Тăшманĕ аллинчен пĕтмешкĕн,
Вилсен ху пурнăçупалан
Чысна-ятна çĕре чикмешкĕн,
Хупа пĕрле каска çине
Тусусене ӳпĕнтермешкĕн,
Унтах, мĕн чун тухичченех
Вĕсем ылханнине илтмешкĕн,
Ним айăпсăр тӳнсе, хавасла
Тăшманăн сĕмсĕр куçĕнчен
Пăхмашкăн пуртă айĕнчен,

Çав юнлă усала таврaслăх
Еметÿпе пĕр никама
Пĕхиллеймесĕр куç хупмa!..
Ах, турăçăм!..

Вара вăл, мĕскĕн,
Аса илет Полтавине,
Хăй килйышне, тусĕсене,
Иртейнĕ кунĕ-çулĕсенĕн
Пуянлăхне, мухтавлăхне;
Аса илет вăл савнă хĕрĕн
Юррисене, хăй çуралса
Кун курнă кивĕ çурт-йĕрне,
Ĕçне те канлĕ ыйхине;
Аса илет вăл ыркурса
Киленнĕ вăхăчĕсене...
Пăрахрĕ йалт вăл вĕсене,
Мĕскершĕн-ши?—

Анчах синкерлĕн
Чанклатрĕ тутăхнă çăра.
Ыйхи вĕçейрĕ Кочубейĕн,
Пĕр шухăш хыпрĕ ун вара:
„Ак манăн юнлă çул-йĕрти
Хĕреспеле курăнан çулпуçăм!
Пур çылăхăн судьи, тÿри,
Пур хурлăха лăплантаруçă;
Пире çăласшăн пăталанмă

Христос ятне аслйлакан,
Ун ўчĕпе таса юннө
Мана кĕрсе сыптаракан.
Вăй-хал илем, тĕрекленем,
Вилем хăюллăн, ĕмĕрлĕх
Чăн пурнăçа хатĕрленем!"

Хăватлă, аслă турă умĕн
Мăнтарăн Кочубей ўксе
Тархаслама хавас кĕçех
Пăшăрхануллăн, ўкĕнўллĕн.
Анчах сăваплă манаха
Курмасть вăл, курчĕ урăха:
Ун умĕнче тăрать иккен
Хăрушă Орлик. Кочубейĕн
Ăш хыпрĕ йĕрĕннипелен.
Вара асаплăн ыйтрĕ мĕскĕн:
„Кунта-им эс, чĕресĕр çын?
Ма манăн юлашки çĕре
Мазепа кансĕрлет тепре?"

ОРЛИК

Допрос пĕтмен: кала йăлтах.

КОЧУБЕЙ

Каларăм ĕнтĕ эп: каях,
Хăвар мана.

ОРЛИК

Йăлт каламашкăн
Хушать пан гетман.

КОЧУБЕЙ

Мĕн çинчен?
Пĕлтертĕм тахçанах: эп каскăн,
Эп хăтланап чеепелен.
Ман сăмахсем йăлтах суя,
А гетман—тĕрĕс çын. Тата мĕн?

ОРЛИК

Эс пуяннă çĕрме пуян,
Кăна пиртен тек пытараймăн.
Диканькăра,[23] эпир пĕлетпĕр,
Пайтах эс алтса чикнĕ мул.
Сана çавах вĕлерттеретпĕр,
Çавăнпалан—тирпейлĕ пул:
Сан пурлăху пĕр пус таран
Çар хыснине лекет кайран.
Саккун çапла. Астутаратăп
Юлашки хут, тек ан тавлаш:
Ăçта вăл, калама хушатăп,
Ăçта эс чикнĕ мул-тавраш?

КОЧУБЕЙ

Çапла: виç мул мана хальччен
Çак пурнăçра савăнтаратчĕ.

Пĕри—ман тӳрелĕхĕмччĕ,
Ăна асап çăлса кăларчĕ.
Ман тепĕр мул—юратнă хĕрĕн
Тасалăхĕччĕ; уншăн эп
Пăшăрханаттăм кунĕн-çĕрĕн,
Сыхлаттăм хамăн куçăм пек:
Мазепа çав мула вăрларĕ.
Пур юлашки ман мулăм халĕ:
Вăл—тавăру, ăна кĕç эп
Турра леçме хатĕрленеп.

ОРЛИК

Старик, ан çап пуш параппан:
Çак тĕнчерен уйăралуçăн
Хытар ху кăмăлна паян.
Шӳт кунĕ мар. Кала эс уççăн,
Асап чăтас килмест пулсан:
Ăçта пытартăн укçуна?

КОЧУБЕЙ

Усал чура! Пĕтерĕне
Эс çыпăçусăр допросна?
Тăхта: парсам çĕре кĕме,
Вара каях Мазепăпа.
Ман пурлăха эс шутлама,
Юнланнă ирсĕр аллупа
Путвалсене чавалама,

Çурта-йěре вут хыптарма,
Касса тăкмашкăн сатăма.
Илсемěр хăвăрпа хěре:
Йăлтах пěлтерě вăл сире,
Пур мул тěлне те хăй кăтартě.
Анчах тархасшăн, турăшăн
Çак кас мана ан чăрмантар, теп.

ОРЛИК.

Укçу ăçта? Ан чăркăшлан.
Тунас тетним?—Ăçта укçу?
Пěлтермесен каçару çук.
Часрах шутла: тěлне кала.
Чěнместěн?—Юрě. Эй, палач!
Палач кěрет...
Асаплăх каçě!
Анчах ăçта-ши гетманě?
Ăçта сиплет-ши юнсăхавçă
Çěлен пек чунěн сăххине?
Нимскер пěлмесěр, киленсе
Çывран хреснай хěр умěнче
Мазепа шăппăн пуç пěксе
Ларать салхуллăн сěмленсе.
Ун пуçěнче тем тěслě шухăш
Арпашăнать пěр-пěринпе,
Мăкăрланать сěм пěлěт пек...
„Çăлма хал çук: пěтет çав шухă,

Çав ăссăр чунлă Кочубей.
Халь, вăрттăн тĕллĕ тахçанхи ĕç
Çывхарнăçемĕн, хытăрах
Пулмашкăн аслă гетман тивĕç,
Тăшман пуç ан йăттăр пачах.
Çăлма май çук: донос çыравçă,
Унпах ун тусĕ те пĕрле—
Кусем часах вилсе выртаççĕ".
Анчах, çывран хĕр çинелле
Пăхса, вăл халĕ шухăшлать:
„Эй, турăçăм! Мĕн пулĕ-ха
Сасартăк вăл çав хăрушла,
Асар-писер пĕр сăмаха
Илтсессĕн? Халиччен ăна
Никам та ним те пĕлтермен,
Анчах синкерлĕ вăрттăна
Тек пытараймăн. Ирпелен
Хăрт-пуртă ярăнса ансассăн—
Мĕнпур Украйнăна çав сасă
Кĕмсĕртеттерĕ. Пур тĕнче
Калаçĕ мăшăрăм çинчен!..
Ах, эп куратăп: тĕпсĕр-шутсăр
Пăлхав пÿрсен çын пурнăçне—
Çын тăвăла пĕччен тĕл пултăр,
Ан йыхăртăр вăл арăмне.
Май çук юнашарах кÿлмешкĕн
Утпа шикленчĕк пăлана.

Асӑрхаймарӑм, мантӑм эп-мӗн:
Халь ҫавӑншӑн асапланап...
Ҫак пурнӑҫра чи хаклине
Чи пахине, пылаккине
Мана вӑл, мӗскӗн, парнелерӗ,
Мана—сӗм чунлӑ ват ҫынна;
Хӑйне вӑл маншӑн хӗрхенмерӗ,
А эп мӗн хатӗрлеп ӑна!"—
Старик пӑхать: епле тӳлеккӗн,
Киленкӗҫ ҫывӑрать яш чун!
Епле ачаш ыйхи халь ун!
Тути кӑшт уҫӑлнӑ; пӗрпеккӗн,
Ним хуйхӑ-суйхӑ пӗлменле,
Сывлать чечен кӑкрипеле.
Ыран... ыран... Кӑрт хусканса
Мазепа илчӗ куҫсене;
Тӑрать, хуллен-хуллен утса
Тухать вӑл йывӑҫ пахчине.

Украйна каҫӗ тӳп-тӳлек.
Тӑп-тӑрӑ пӗлӗт. Тӗлкӗшеҫҫӗ
Ҫут ҫӑлтӑрсем. Тӗлленнӗ пек
Канать лӗп сывлӑш. Кӑшт чӗтреҫҫӗ
Ҫуткам тирекӗн ҫулҫисем.
Анчах сӗм тӗттӗм ӗмӗтсем
Мазепа чунӗнче: шӑп каҫӑн
Ҫӑлтӑрӗсем халь, аййпланӑн,
Кулса сӑнанӑ пек ӑна.

Йěркен-йěркен тăран тирек,
Пуçěсене хуллен кăна
Сулла-сулла, судьесем пек
Пěр-пěринпе пăшăлтатаççě.
Тӳлек, лěп каç халь гетмана
Хура тěрме пек туйăнать.

Сасартăк... темле ахлату
Вăл илтрě пек кермен енчен...
Те шухăш тěлěрчěкě ку,
Те тăмана йěрет çинçен,
Те тискер кайăк, те этем
Нăшкать асаплантарнăçем,
Те урăх сасă-чěвěсем...
Анчах пăшăрханан старик
Хăй кăмăлне çěнтереймерě:
Йынăшăва илтсен—шари
Вăл ячě çухăрса тискеррěн.
Çапла вăл ěлěк вăрçăра
Забелăпа, Гамалейпе,
Тата... ак çак... Кочубейпе,
Вут-çулăма пăхмасăрах,
Юланутпа вěçсе пырса
Яратчě хыттăн çухăрса.

Кěренлене пуçларě шуçăм:
Çунаççě пěлěт хěррисем,
Йăлтăртататъ тěме-тӳрем,

Вăрман тăрри, ана-çаран,
Саралакан ыраш, хум-шыв.
Янрать ирхи хавас кĕр-шав.
Этем вăранчĕ ыйхăран.

Мария тутлăн çывăрать-ха
Кĕç ыйхă витĕр кăшт кăна
Илтет—такам çывăхарать пек,
Тытать пек уринчен ăна.
Вăранчĕ вăл, анчах каллах
Кулса куç хупрĕ хăвăртрах:
Пăхма хал çук хĕвел çине.
Мария тăсрĕ аллине,
Çемçен пăшăлтатса чĕнет:
„Мазепа, эсĕ-и ку?..." тет.
Анчах илтет вăл урăх сасă...
Ах, турăçăм!.. Шартах сиксе,
Пăхать вăл, хăй куçне шанмасăр:
Умра тăрать-мĕн... амăшĕ...

АМĂШĔ

Шăп пул, шăп пул, ан шарласам,
Ан пĕтерех пире: çĕрле
Кунта эп кĕтĕм йăпшăнса
Пĕртен пĕр тилмĕрӳпеле.
Паян вĕлермелле, кĕçех.
Вĕсен хаярлăхне эс çех

Пултаратăн халĕ çемçетмешкĕн.
Хăтар, хăтарччĕ аçуна.

ХĔРĔ

Мĕнле атте? Кам вĕлересшĕн?

АМĂШĔ

Е халь те эс илтмен ăна?..
Çук! Эсĕ мăнастирте мар,
Эс керменре, сан пĕлмелле—
Мĕн евĕр гетман хăр-хаяр,
Мĕнле тăшманĕсемпеле
Çиллес вăл, мĕнешкел унне
Патша итлет пур сăмахне.
Анчах курап: Мазепашăн
Эс писнĕ ху килйышунтан.
Эс çывăратăн, а лере
Хăрушă суд—хăпать сехре,
Вулаççĕ приговор çак ир,
Аçу валли хăрт-пуртă хатĕр—
Çук, ют-мĕн пĕр-пĕрне эпир...
Мария, хĕрĕмçĕм, тăна кĕр!
Чупсам, пуççап часрах ăна,
Хăтар, хăтарччĕ аçуна,
Пире ыр пирĕшти пулсам эс:
Сан куçусем чĕресĕрсен
Аллисене çыхма пултарĕç,

Пуртти вĕçерĕнĕ вĕсен.
Ыйт, макăр, хуш—чараймĕ гетман:
Эс уншăн ху чысна йалт мантăн,
Пăрахрăн пĕтĕм тăванна,
Турра...

ХĔРĔ

Мĕн пулчĕ-ши мана?
Атте... Мазепа... вĕлерӳ...
Çак керменрех анне те ман...
Çук, е эп тайăлнă ăсран,
Е ку синкерлĕ тĕлĕрӳ.

АМĂШĔ

Тур çырлахах сана; çук, çук—
Ку тĕлĕк мар. Е хальччен
Пĕлместĕн эс вара: аçу
Çӳрерĕ тарăхса тем пек,
Сан намăсна вăл тӳсеймерĕ,
Шав таварасшăн ăванса,
Патша патне донос çырса
Вăл гетман пусмăрне питлерĕ.
Кайран палачăн аллинче,
Асапсене вăл тӳсеймесĕр:
„Чее элекçĕ эп, киревсĕр"
Тесе хăйне хăй йышăнчĕ.
Хăюллă тĕрĕслĕх çынни

Паян çар халăх умĕнче,
Çӳлти чăн туррăмăр çырни
Упраймасассăн кунçулне,
Пуçне касаççĕ унăнне.
Ку таранччен вăл тăр пĕччен
Ларать тĕрмен пер пашнинче.

ХĔРĔ

Ах, турă, турăçăм!.. Паян!
Аттеçĕм! Мĕскĕн аттене!..

Сип-сивĕ вилĕпе пĕр тан
Хĕр ӳкрĕ вырăнĕ çине.

Шап-шакăр çĕлĕк, чăп-чăпар.
Йăлтăртатаççĕ сăнасем.
Юланутпа сердюкĕсем[25]
Вĕçсе çӳреççĕ чăл-та-пар.
Йĕркелешеççĕ, танлашаççĕ
Çар полкисем. Эшкер вĕрет.
Вĕчĕрхенет кашни чĕре.
Çул тăрăх шав çынсем пыраççĕ,
Çĕлен хӳри пек çул шăвать.
Уй варринче—хăрушă сарăм—
Кĕпер пекки. Унта патваррăн,
Кулкаласа, палач утать,
Хăй юн парнишĕн антăхать!

Пĕр йывăр пурттине алхаслăн
Çĕклет вăл шурă аллипе,
Пĕр шўтлешсе илет—хаваслăн
Çавар карса тăрансемпе.
Пур сас та хутăшнă пĕрле:
Хĕрарăм кăшкăрни, вăрçни,
Кулни, пĕрне-пĕри хăртни—
Йăлтах пĕр шав пулса кĕрлет.
Сасартăк хыттăн çухăрса
Пĕри хупларĕ пур сасса.
Шăп. Ут ури шаклатни çеç
Хиствлĕн çывхарса килет.
Унта, сердюкĕсемпеле
Старшинисен хушшийĕнче
Мухтавлă гетман курăнчĕ
Йăлттам хура лаши çинче.
Ак Киев çулĕпе килет
Пĕр урапа. Пурин те куçĕ
Тинкерчĕ çавăн çинелле.
Унта—çуттĕнчерен каюçăн
Чунĕпелен лăпланнăскер,
Хăватлă чăн ĕненўпе
Хăй кăмăлне пусарнăскер—
Пĕр айăпсăр ват Кочубей
Ларса пырать; унпа пĕрле—
Çак пурнăçран йăлт сивĕннĕн,
Усал тăшман танатинче

Учӳк путекĕ еверлĕ
Йăваш та лăпкă Искра-мĕн.
Лав чарăнчĕ. Хор хытă саслăн
Янраттарса юрласа ячĕ.
Кадило сулланать, кĕç латăн
Шăршиллĕ тĕтĕм йăсăрланчĕ.
Мăнтарăнсен чунне çăласшăн
Çынсем пĕр сассăр кĕлтăваççĕ.
Лешсем ак утрĕç, улăхаççĕ.
Умне хĕрес хывса, пуç хучĕ
Ват Кочубей каска çине.
Пур халăх, вилнĕ пек, шăп пулчĕ.
Палач çĕклерĕ пурттине.
Йăлтлатрĕ пуртă,—çыннăн пуçĕ
Сиксе те ӳкрĕ çĕр çине.
„Ахх“ терĕ халăх. Самантран
Тата пĕр пуç пырать кусса,
Куçне мăч-мăч хупкаласа.
Хĕрелчĕ курăк юнпалан.
Палач, çиллессĕн савăнса,
Çав ик пуçа та, çӳçĕнчен
Тăртанна аллипе йăтса,
Силлерĕ халăх умĕнче.

Вĕлерчĕç. Куракан çынсем
Саланчĕç харпăр-хăй килне.
Ĕмĕртенхи ĕçне-хĕлне
Аса та илчĕçĕ вĕсем.

Уй пушанать ерипенех.
Ҫак вăхăтра каска патне
Ик арăм, чупнă пек, васканă,
Хăйсем йăлт ырнă, тусанланнă.
Вĕлернĕ вырăна вĕсем
Ҫывхарнă хытă шикленсе.
Анчах такам: ĕлкĕрейместĕр,
Тесе пĕлтерчĕ вĕсене,
Хăй пўрнипе хире тĕллерĕ.
Унта—пăсаççĕ кĕперне,
Унта хура тумтирлĕ пупĕ
Шав кĕлтăвать-ха, ик казак
Пуш урапа ҫине часах
Йăтса лартаççĕ юман тупăк.

Юланутсен умĕпелен
Хаяр Мазепа пĕр пĕччен
Каять вĕлернĕ вырăнтан.
Тем татăлнă пекех—пуш-пушă
Ун ăшчикки, ăна хăрушă.
Вăл тулашать чунтан варган.
Никам та ун патне пымарĕ,
Вăл пĕр сăмах та каламарĕ,
Вĕҫтерчĕ, ҫил пек, аякка,
Лаши ун ўкрĕ кăпăка.
Килне ҫитсессĕнех вăл ыйтрĕ:
„Мĕн хал Мария?" Килтисем
Пуплеççĕ шăппăн, шикленсе...

Ирёксёрех хăраса ӳкрĕ,
Васкарĕ вăл пике патне,—
Ун канлĕ пӳлĕмĕ пушах.
Тухать Мазепа пахчине,
Çӳрет вăл кăмăлне хуçса:
Пĕве йĕри-тавра уттарчĕ,
Хуралтăсен çумĕсене,
Тĕмсен хушшисене ухтарчĕ—
Пуш-пушă... тарнă!—Кĕç чĕнет
Вăл шанчăклă тарçисене,
Хастарлă сердюкĕсене.
Лешсем çĕкленчĕç, чупкалаççĕ.
Утсем синкерлĕн хартлатаççĕ.
Сиксе утланчĕç маттурсем,
Кăшкăрашса та ĕрлешсе
Тапса сиктерчĕç утсене
Мĕнпур вăйпа, мĕнпур енне.

Иртеççĕ хаклă самантсем.
Мария таврăнмасть. Çынсем
Епле вăл тарнине, иккен,
Пĕр чунĕ те курман, илтмен.
Мазепа шăппăн шăл хăйрать,
Тарçи-тĕрçи чĕтрет халь унăн.
Çунан чĕрипеле вара
Хĕр пӳлĕмне кĕрсе ларать.
Питĕрĕнет салхуллă гетман.
Çĕрĕпелех куçне хупмасăр,

Тӳшек-минтер ҫине пăхса,
Вăл ларчĕ халь лăпланаймасăр
Вĕри шухăшсемпе ҫунса.
Ирпе ун ҫитрĕҫ тарҫисем —
Пĕри, тепри... вĕсем ĕшеннĕ.
Аран утаҫҫĕ лашисем.
Пур хырăмсалăхĕ, йĕвенĕ,
Йĕнер ҫыххи, чĕрни-таканĕ —
Йăлт витĕннĕ сар кăпăкпа,
Юнланнă, туснă, таткаланнă.
Анчах пĕри те пĕр хыпар
Кӳрсе ăна эмеллеймерĕҫ.
Мария пурăнăҫĕн йĕрĕ
Хупланчĕ сасă йăннă пек.
Пĕр амăш ҫеҫ хăй нушипе
Таҫти инҫе ют ҫĕрелле
Ăсаннă, мĕскĕн, пуҫилле.

ВИҪҪĔМĔШ ЮРĂ

Украйнăн харсăр ҫулпуҫне
Аяккалла кармашăнмашкăн
Хуйхи-суйхи чăрмантармасть-мĕн:
Вăл хăйĕн вăрттăн шухăшне
Ҫирĕплетсех пырса пĕр майлăн
Ҫаплах ĕҫлет хăй енĕпе —
Мăнаҫлă швед королĕпе.
Ҫав вăхăтрах, хăшне-пĕрне

Шепрех вăлтса улталамашкăн,
Вăл чĕнтерет тухтăрсене,
Чире хывать, халтан йалт кайнăн
Ах ахлатса выртать асаплăн.
Юратăва, ĕçке-çике,
Вăрçа-харçа, ĕçе-хĕле
Ялан вĕри юнĕпеле
Чунтан-вартан парăннăскер—
Чирленĕ, ватăлнă вăл, супнă:
Инкек-синкек те пысăк унăн.
Вăл хатĕр çак çуттĕнчерен
Ӳпкевсĕр, лăпкăн уйрăлмашкăн;
Часрах чиркӳ йăли тăвасшăн
Пуп-тавраша вăл чĕнтерет:
Лешсем, вилес çук çĕртенех,
Ана тур юнĕ сыптараççĕ;
Ултавлă шурă çӳç çине
Таса йывăççуне тăкаççĕ.

Анчах вăхăт иртет. Килмеççĕ
Мускавăн кĕтнĕ хăнисем.
Ахаль иккен хатĕрленеççĕ
Сыхлавлăн тăнă вырăссем—
Тăшманăн кив масарĕсен
Таврашĕнче виле кĕлли
Тумашкăн çав шведсем валли.
Сасартăк Карл вăрçăпа
Украйнăна пырса çапать.

Кун çитрĕ. Тăчĕ вырăнтан
Вилмешкĕн выртнă халсăр вата.
Ĕнер кăна аран-аран
Ахлатакан этем—хăватлă
Тăшман вăл Петĕре паян.
Хăй çарĕ умĕнче манаçлăн
Куçпа вăл çиçĕм çиçтерет;
Хĕçне суллать, яш паттăр халлăн
Десна хĕрринелле хастарлăн
Ут утланса вăл вĕçтерет.
Çапла, тахçан, пĕр кардинал та,
Чее кăна, хевтесĕр вата—
Тиара тăхăнсан—чĕрлет:
Сывалнă, çамрăкланнă, тет.
Çунатланса вĕçет хыпар.
Украйна шавлама пуçларĕ.
„Вăл—шведсемпе, вăл улталарĕ,
Вăл Карл ури умне пăрахрĕ
Хăй бунчукне“. Хыпать пушар,
Юнпа хĕрелчĕ ирхи шуçăм,
Çĕклет вăл халăх вăрçине.
Кам халь виçейĕ урăм сурăм
Патша хаярĕ-çиллине? [26]
Чиркÿсенче анафема
Кĕрлет Мазепа ячĕпе:
Пуçлаççĕ ылханма ăна,
Палач[27] асать ун сăнĕпе,

Кĕлеткине чикет унне,
Хĕнет çынна хĕненĕ пек.
Пухусенче шăв-шав кăна,
Лартаççĕ урăх гетмана.
Час Петĕр Искрăн, Кочубейĕн
Килне йышне сив Енисейĕн
Тыткăнĕнчен чĕнсе илет,
Куççуль тăкать вĕсемпеле;
Каллех пит пысăк сум-хисеп,
Тем тĕслĕ пурлăх, хĕрхенсе,
Халь вĕсене вăл парнелет.
Мазепан ĕмĕрхи тăшманĕ
Старик Палей та таврăнать
Сĕм Çĕпĕртен Украйнăна;
Халь вăл патша патнех çывхарнă.
Пăлхавçăсем чĕтре пуçлаççĕ,
Вĕсем халь юлчĕç тăлăха:
Кĕç запорожец пуçлăха
Ват Чечĕле[28] тытса касаççĕ.
Эс те, вăрçа-харçа савса,
Король коронине хывса,
Салтак шлемне тăхăннăскер,
Эс те ак час... куву кĕске:
Эс куртăн ĕнтĕ аякран
Полтава хӳмине паян.

Патша та çитрĕ çарĕпе,
Сасартăк тухнă тăвăл пек.

Тӳрем ҫӗрте ик станӑн ҫарӗ
Пӗрне-пӗри чеен ҫывхарчӗҫ.
Ҫапла пӗр хут ҫеҫ мар хӑюллӑ
Тытӑҫура хӗненнӗ ҫын—
Килсе тухать тинех хӑй халлӑ
Тӑшман умне алтивӗҫҫӗн.
Юн шӑршипех мухмӑрланса,
Хаяррӑн вӑл тӑрать пӑхса.
Хӑватлӑ Карл курать халь—Нарва
Таврашӗнчи ҫынсене мар.
Ку ҫар уп чухнехи пек тармӗ,
Йӗркеллӗ, ҫирӗп, тан ку ҫар.
Салтак тӳлек, анчах вӑр-вар
Ҫавӑрӑнкалать вӑл кирлӗ чух,—
Ури ҫине пустармӗ, ҫук!
Штыксен йӗрки тӑрать пӗр кар.

Анчах ҫапах—Карл ир ҫинче
Вӑрҫма шут тытрӗ ӑшӗнче.
Шведсем харлаттарса ҫывраҫҫӗ,
Пӗрех палатка ӑшӗнче
Ик ҫын пӑшӑлтатса лараҫҫӗ.

„Ҫук, Орликӗм, куратӑп эп:
Эпир ҫӗкленнӗ васкаварлӑ.
Пит чӑрсӑр, пит начар хисеп,
Ӗҫ пулмӗ, тетӗп, пархатарлӑ.
Ҫитмеҫҫӗ пуль ӗмӗтӗмсем.

Мĕн таван? пысăк йăнăш турăм
Çав Карл вăйне эп ĕненсе.
Ăчи вăл харсăр, шухлăх пур ун,
Пĕр-иккĕ тытăçса пăхма
Пултаратех вăл çĕнтерӳллĕн,
Тăшман патне апат тума
Вăл кустарса çитет каçкӳлĕм,[29]
Умне етре пырса ӳксен—
Кулса кăна пуплет иккен[30].
Çĕрле тăшман умне пырать вăл—
Раççей пуçтах салтакĕ пек,
Е казака хăй аллипе
Хăех персе йăвантарать вăл,
Паян хăтланнă евĕрлĕ,
Е хăй суранланать пĕрле.[31]
Анчах тем пысăккăш патшалăх
Тытса тăран улăппалан
Çук унăн вăйĕ çапăçмалăх:
Вăл пурнăçа, пĕр полкпа тан,
Параппанпах çавăркаласшăн;
Вăл суккăр та тӳрккес, мехелсĕр,
Каппайчăк, çăмăлттай, тем евĕр
Ăрăскала шанса вăрçасшăн,
Тăшманăн çĕнĕ вăй-халне
Вăл ĕлĕкхи çĕнтерӳпе
Виçет; хуçать, пĕлетĕп эп,
Хуçать вăл ак мăйракине.

Хам ватăлмалăх кунăмра
Сĕтрĕнчĕкпе çыхлантăм, намăс!
Ун харсăрлăхне шаэнăран,
Йăваш хĕр ăсĕ евĕр, ман ăс
Сăхланчĕ-мĕн çĕнтерÿсен
Вылянчăк телейне“.

ОРЛИК

Ирччен
Кĕтер-ха, çапăçса пăхар.
Иртмен-ха вăхăт—Петĕрпе
Каллах тума пулать кавар,
Иккĕленмелĕх çук, теп эп:
Патша, эпир çĕнтерсенех,
Пирĕнпеле килĕшетех.

МАЗЕПА

Çук. Вырăс патшине халь тин
Манпа пулмашкăн май çуках.
Шăпам ман паллă тахçанах,
Вăл татăклă. Мĕн ĕмĕртен
Пĕр çилĕпе çунаттăмччĕ.
Пĕрре Азов таврашĕнче
Хаяр патшапала пĕрле
Эп ĕçкĕ ĕçнĕччĕ çĕрле:
Курка тулли ерех вĕрет,
Халлап-юмах... Çав сехетре

Хăюллă пĕр сăмах каларăм.
Именчĕ яш хăна-вĕрле.
Патша, хăй куркине вăр-варрăн
Пăрахрĕ те, çиллипеле
Мана—шуралнă мăйăхран
Туртса лăскарĕ вăйпалан.
Унчух эп нимĕн тăваймарăм,
Пусартăм çиллĕме; анчах
Ăшра тупа туса каларăм:
Тавратăп, терĕм, çав-çавах!
Çав тупана эп çав касран,
Хĕрарăм хăйĕн варĕнче
Йăтса çӳрен ачапа тан,
Ăшра усрарăм халиччен.
Кун çитрĕ. Ĕмĕр-ĕмĕрех
Капла вăл асăнĕ мана.
Мана халь пӳрнĕ—Петĕре
Хăй ĕçĕсемшĕн тавăрма:
Эп—унăн пуçкăшăлĕнче—
Шăлан-йĕппи хам виличчен.
Мазепана мăйăхĕнчен
Тепре тытасшăн—кучухне
Вăл чи паха кунĕсене,
Аслашшĕсен хулисене
Ним шутламасăр парĕччĕ.
Анчах пĕтмен-ха пирĕн шанчăк:
Кам тарасси—шурăмпуçран
Килет...

Кусне хупать, лăпланчĕ
Раççей патшин пуçне сутан.

Хĕрелчĕ шуçăм шĕл кăваррăн.
Сартсем çинче, тӳрем çĕрте
Тем чухлĕ тупă хăр-хаяррăн
Кĕмсĕртетеççĕ. Пĕлĕте,
Çавран-çавран, хăмăрланса,
Çĕкленчĕ тĕтĕм палкаса.
Полксен ĕречĕ тачăланчĕ,
Пăшал салтакĕсем чупса
Тĕмсем ăшне кĕрсе саланчĕç.
Етре çӳрет куса-куса,
Ши-ши шăхраççĕ пульăсем;
Сип-сиввĕн йăлкăшрĕç штыксем.
Вут-çулăм витĕр ыткăнаççĕ
Ку таранччен ялан çĕнсе
Чап илнĕ швед ывăлĕсем;
Хум-шавлă утлăçар кустарчĕ,
Ун хыççăн çуранниваскать—
Кашни шитех хăй терчĕпе,
Сулмаклă çирĕплĕхĕпе
Тĕреклетсе вăл тăрмашать.
Кĕрлет, çунать пур вăрçă хирĕ,
Анчах телейĕ—пирĕн май,
Кĕретĕнех вăл ĕнтĕ пирĕн
Ĕçе пуçларĕ пулăшма.
Çапса пыратпăр çапмаллах:

Арпашăнаççĕ, тăкăнаççĕ
Тăшман салтакĕсем çаплах.
Аран çеç Розен тухса тарчĕ,
Çакланчĕ харсăр Шлипенбах.
Хĕстернĕçемĕн хĕстеретпĕр
Эпир мухтавлă шведсене;
Вĕсен ялавĕ сĕмленет;
Утăмсерен пире, пĕлетпĕр,
Вăрçа пилленĕ турă хăй
Парса пырать çĕн тӳсĕм, вăй.

Шăпах çав ырă сехетре
Тивлетлĕ Петĕр сасă пачĕ:
„Пуçлар, тур пулăштăр пире!"
Чатăрĕнчен вăл тухса тăчĕ.
Ун çумĕнче хăй савакан
Çарпуçĕсем ушкăнпалан.
Ун куçĕсем йăл-йал çунаççĕ.
Пăхма хăрушă ун сăнне.
Ун аллисем çунат хушаççĕ,
Ури тивмест ун çĕр çумне.
Вăл аслати пек ун чухне—
Хаяр та хӳхĕм—ытарма çук.
Утать вăл. Акă ун умне
Лаша илсе пырса тăратрĕç.
Йăваш та шухă, ырă ут.
Йĕри-тавра хăрушă вут.
Çакна кура, ыр ут хăрарĕ—

Четрет те чалăшшăн пăхать;
Хăватлă çын утланнăран
Мăнаçлăн мухтанса, вара
Ырми-канми вăл ыткăнать;

Хĕвел кăнтăрлана сывхарчĕ.
Тӳсме çук пĕçертет. Кавасçĕ,
Сухаçă пек, çарçыннисем.
Унта-кунта ташлаткаласçĕ
Лашисене казакĕсем,
Йĕркелешесçĕ полкĕсем.
Шăп. Вăрçă музăкĕ лăпланчĕ.
Сăртламсенче тек уламасçĕ
Выç кашкăр евĕр тупăсем.
Сасартăк—харăссăн, пур аслă
Тӳрем талккăшĕпех пĕр саслăн
Урра! янрарĕ инçетре:
Полксем палларĕç Петĕре.

Çар умĕпе вăл вĕçсе иртрĕ
Çапăçмаллах хавас, хăватлă,
Ун куçĕ пĕтĕм вăрçă хирĕн
Тавралăхне сăнать хастарлăн.
Ун хыççăн ыткăнать пĕр ушкăн;
Кунта—çĕрти улшăнуллăн
Сикен шăпа вылявĕнче,
Патшалăх, вăрçă ĕçĕнче
Ăна пулăшакан çынсем—

Юлташӗсем, ывӑлӗсем,
Мӗнпурӗ Петӗр йӑвинче
Ӳссе ҫунат хушнӑскерсем:
Ку—Шереметев, ырӑ паттӑр,
Ку—Брюс, ку—Боур, ку—Репнин,
Тата телей йӑпатнӑ ратсӑр—
Хӑй ҫур патша пек аслӑ ҫын.

Кӑвак тумтирлӗ те хастарлӑ
Дружина речӗсен умне
Йӑтса пыраҫ аманнӑ Карлӑн
Хусканайман кӳлепине.
Асапланать геройӗ хыттӑн,
Сӑнран йӑлт ӳкнӗ вӑл; ун хыҫҫӑн
Пыраҫҫӗ ҫар пуҫлӑхӗсем.
Тем шухӑшлать вӑл тӗмсӗлсе.
Пӑхсассӑн, темӗскер ӑна
Пит тарӑхтарнӑн курӑнать:
Ҫак кӗтнӗ вӑрҫӑ короле
Иккӗлентернӗ пек темле...
Сасартӑк халсӑр аллине
Вӑл сулчӗ вырӑссен енне—
Хускатрӗ хӑй полккисене.

Тӗл пулчӗҫ тӗтӗм ӑшӗнче
Патша ҫарӗпеле вӗсем:
Тапранчӗ акӑ—ишӗлсе
Кӗмсӗртетмешкӗн ҫуттӗнче,

Тапранчĕ ĕмĕр манма çук
Полтавăри хай çапăçу!
Вутра, çын хӳмипе картланă
Вут çумăр-пуля айĕнче,
Пĕр рет тӳнсен—тепри васканă,
Штыкне тăсса виле çинчен.
Сулмаклă хăмăр пĕлĕт евĕр—
Çунатлă утлăçар хисепсĕр
Кас-кас отрядсемпе тухать,
Пĕрне-пĕри пырса çапать:
Йĕнер-йĕвен чăлтăртатать,
Хĕç-сăнă хуçăлать, ванать.
Чугун шарсем йĕри-тавра
Виле çине виле тăкаççĕ,
Сикеççĕ, çурăлса шартах,
Çĕре алтаççĕ, чашкăраççĕ
Юн тулнă путăк-шăтăкра.
Швед, вырăсĕ,—сывви-чĕрри—
Чикет, касать пĕрне-пĕри.
Параппансем пантăртатаççĕ,
Шăл-çăварсем шатăртатаççĕ.
Кĕмсĕртетеççĕ тупăсем,
Тапăртатаççĕ учĕсем,—
Тăраççĕ кĕçенсе, чĕвен.
Чĕр вилĕм, тамăк—пур енчен.

Çуйхашуран пĕр шикленмесĕр,
Çарпуçĕсем хавхаланса

Тӳлеккӗн асӑрхаççӗ—сӗмсӗр
Кӗрлен, асан, уран вӑрçа.
Сӑнаççӗ çапӑçу вӑйне,
Шутлаççӗ мӗн тумаллине;
Кам пӗтессе, кам çӗнессе
Вӗсем курса-пӗлсе тӑраççӗ;
Пӗр-пӗринпе уллах çӗрте
Ӗççем çинчен сӳтсе-яваççӗ.
Анчах Мускав патшипелен
Çумрах тӑрса пуплешекен
Шуралнӑ çарçынни кам çак?
Ӑна ик хулӗ айӗнчен
Тытса тӑраççӗ ик казак.
Чӗрипеле лӑпланаймасӑр,
Пӑшӑрханать çав ватӑ паттӑр;
Чухлавлӑ куçӗсемпеле
Пӑхать вӑл вӑрçӑ хирнелле.
Текех лаши çине сиксе
Вӑл утланаймӗ; халиччен,
Ют çӗршыва пуç янӑскер,
Вӑл супнӑ тӑлӑххӑн, пӗччен.
Текех кустармӗçӗ, Палейӗн
Йыхравлӑ сассине илтсе,
Ун патнелле яш-йӗкӗтсем!
Анчах мӗскершӗн-ха, мӗскершӗн
Çиçсе илет ун çивчӗ куçӗ?
Ма ват çамки каç сӗмӗ пек,

Хупланчĕ хăмăр çилĕпе?
Мĕн тиврĕ ун чунне? Мĕн пулчĕ?
Е акăш-макăш тĕтĕм витĕр
Вăл курчĕ хăйĕн тăшманне—
Мазепана? Тен, ун пирки-тĕр
Вăл халĕ вата кунçулне,
Хĕç çĕклейменшĕн тарăхса
Тиркерĕ, курайми пулса.

Мазепа, шухăша кайса,
Тинкернĕ вăрçă хирнелле.
Йĕри-тавра, карах тăрса,
Пăлхавçă казаксемпеле
Сердюкĕсем, старшинисем
Ăна хӳтлеççĕ пикенсе;
Унпа пĕрлех—тăванĕсем.
Сасартăках—пăшал сасси.
Варт! çаврăнчĕ шикленнĕ гетман:
Ак, Войнаровский аллинчи
Мушкет кĕпçи тĕтĕмленет-мĕн.
Çич-сакăр утăмра çап-çамрăк
Казак юн юхтарса выртать.
Лаши—йăлтах тусан та кăпăк—
Пĕчченçĕ ĕрхĕнсе тарать,
Вут çутипе вăл хупланать.
Казакĕ гетман çинелле
Кустарнă-мĕн хĕç çĕклесе,
Куçпа вут-çиçĕм çиçтерсе.

Старик пырать ун патнелле,
Темскер ыйтать. Анчах казакӑн
Кӗç чупӗ тухмалла, иккен.
Пӑхать сӳнес куçӗпелен
Юнанӑ пек вӑл, халь мӑнтарӑн,
Раççейӗн ирсӗр тӑшманне;
Сив вилӗм çапнӑ яш сӑнпах
Марийн кӑмӑллӑ ятне
Аран тепре вӑл асӑнать.

Анчах мехел çитсе килет:
Çывхарчӗ çӗнтерӳ сехечӗ.
Урра! Ватать пӑр; швед шӗвелчӗ.
Ак ыр самант! Ак чэп-тивлет!
Тепре хӗссессӗнех—тӑшман
Тара пуçлать пур вӑйпалан[31].
Ун хыççӑн хӑврӗ утлӑ çарӗ,
Хӗçсем мукалчӗç çын касса,
Тӑшман вилли хире хупларӗ,
Сӗм саранча пек тӑкӑнса.

Патша кӗрекере ларать.
Ун куçӗ ялкӑшать çап-çуттӑн,
Унта мухтавлӑх куранать.
Ĕçки-çики илемлӗ унӑн.
Тулта хаваслӑн кӑшкӑраççӗ
Çарçыннисем. Мӑн чатӑрта
Петӗрпеле пӗрле лараççӗ

Ун ҫар пуҫлăхĕсем, унтах
Ют пуҫлăхсем те—тыткăнта.
Патша пурне те пĕр тивлетлĕн
Чыслать, саватъ те ачашлать;
Хăйне вĕрентекен ҫынсемшĕн
Хисеплĕ тав курки йăтать.

Анчах ăҫта эпир кĕтен
Чи аслă, тивĕҫлĕ хăна?
Ăҫта пире ăса-тăна
Хĕне-хĕне вĕрентекен?
Ăҫта—ялан пире хăмсарнă,
Анчах, Полтава паттăрне
Ҫĕнейменрен халь йăвашланнă—
Каппайчăк Карл кучуне?
Ăҫта тата Иуда пек
Мазепа тарнă хăраса?
Ма ҫук король хăнасемпе?
Ма пуҫ касман-ха ултавҫа?[33]

Мазепăпа король пĕрле
Ҫара ҫеҫенхирсемпеле
Юланутпа халь ыткăнаҫҫĕ.
Тараҫҫĕ. Пĕр шăпа вĕсен.
Хăранипе, ҫиллипелен
Король вăй хушнă пек пăртакҫĕ.
Вăл маннă йывăр суранне;
Ҫĕр ҫинелле пĕксе пуҫне,

Хистет хăй лашине вăйран—
Тарать йĕрлен вырăссенчен;
Тарçи-тĕрçи ун хыçĕнчен
Çитсе пырать аран-аран.

Унпа пĕрле юнашарах,
Ват гетман сиктерет утне;
Вăл витĕр куракан куçне
Выляткалать йĕри-тавра.
Умра ак хутор... Ма сасартăк
Мазепа шикленсе ӳкет?
Ма айккипе кăна çав ватă,
Çил евĕр, кустарса иртет?
Е çак çын чунĕсĕр карташ
Çак çурт, çак сат, çак хирелле
Яр уçăлнă хапха-тавраш—
Ăна халь маннă пек темле
Халăпсене асилтерет?
Таса чуна пĕтерекен!
Палларăн-и эс çак чечен,
Хаваслă пулнă çурт йĕре?
Унта эс ĕлĕк чух, телейлĕ
Килйыш кĕрекине ларса,
Эрехпеле хĕрсе кайса,
Юрланă юрă, шӳт шӳтленĕ.
Палларăн-и эс пирĕшти-хĕр
Ыркурнă канлĕ йăвана?
Палларăн-и сатне? Ун витĕр

Сĕм тĕттĕм каç эс çав чуна
Çеçенхире ертсе тухсаттăн...
Палларăн эс, йăлтах палларăн!

Хире каç мĕлкисем пĕркеççĕ.
Кăвак сĕм Днепр хĕрринче,
Чул сакăлта хушшисенче
Мулкач пек шиклĕн тĕлĕреççĕ
Россияпала Петĕрĕн
Тăшманĕсем. Карл, темскере
Ĕмĕтленсе, йăлтах лăпланнă;
Полтава инкекне вăл маннă.
Анчах Мазепа çыврайман,
Пăлханнă унăн тĕттĕм чунĕ,
Тулашнă, туртăшнă ялан.
Сĕр варринче сасартăках
Ăна чĕнеççĕ. Вăл куç уçрĕ.
Пăхать: такам ун тĕлĕнче,
Пӳрнепеле юна-юна,
Пĕшкĕнкелет-мĕн. Гетмана
Пуçне касассăн туйăнчĕ...
Вăл курчĕ хăйĕн умĕнче
Çӳçне-пуçне салатса янă,
Çетĕксемпе хупланкаланă
Ырхан хĕрарăм: пĕр пĕччен
Тăрать вăл уйăх çуттинче.
Ун путнă куçĕсем çиçеççĕ...
„Е тĕлĕк ку?... Мария... Эс-и?“

МАРИЯ

Ах, ан шарла, шăп пулччĕ, тусăм!...
Атте-анне куç хупрĕç тин..,
Тăхта... илтме пултарĕç, тен.

МАЗЕПА

Мария, мĕскĕн, мĕскĕн чунăм!
Тăна кĕр! Турăçăм!.. Мĕн пулчĕ?

МАРИЯ

Итле-ха: мĕнешкел чее!
Мĕне çав кулăшла халап?
Анне паян мана калать—
Аттеçĕм вилнĕ ман, теет.
Вара мана кăтартрĕ вăрттăн
Шап-шурă пуç—ах, тур çырлах!
Ялан усал хыпар тăнлатăн,
Ăçта тарар? Эс шухăшла:
Çав пуç çын пуçĕ те пулман-мĕн,
Вăл пулнă кашкăрăн кăна!
Мĕнпе мана вăл улталасшăн!
Ну, намăс мари-ха ăна
Мана çапла асапламашкăн?
Мĕскершĕн-ха?—Санпа паян
Эп тарасран хăранăран.
Капла юрать-и?

Чун тагса,
Хыт кăмăлне хайăрттарса,
Итлет савнийĕ савнине.
Леш чараймасть хăй шухăшне,
Шав сӳтĕлет хыпаланса:
„Çапах, эп астăвап пĕр хир...
Темчухлĕ халăх... вилесем...
Аннепелен унта эпир
Пырсаттăмăр—уяв, тесе...
Анчах ăçтаччĕ эс?.. Ма уйрăм
Çӳретĕп сансăр эп пĕччен?
Атя киле. Часрах... Каç турăн.
Ах, эп курап, ман пуç иккен
Пăшăрханать çук япалашăн:
Сана эп урăх этем пек
Шутланă мĕн. Каях, старик,
Эс йĕкĕлтӳллĕн пăхкалатăн.
Эс сăнсăр-питсĕр, эс тискер.
Хăрушă эсĕ. Вăл—чипер:
Ун куçĕнче юрату çеç,
Сăмахĕсем мĕнле çемçе!
Ун мăйăхĕ юртан та шурă,
А сан—юнпа варланнă“.

Чурăс

Сасăпала вăл кулса ячĕ,
Çап-çамрăк ту качаки пек
Ялт сикрĕ те вăл,—майĕпе
Чупса кайса куçран çухалчĕ.

Каç сĕмĕ сирĕле пуçларĕ.
Мал енĕ шăппăн хĕрелет.
Çунать казак вутти-кăварĕ,
Казак тĕш тулă пĕçерет.
Драбант йĕнерсĕр лашине
Антарчĕ Днепр хĕррине,
Анасласа вăл шăварать.
Вăранчĕ Карл. „Эхе! Çĕр каçнă!
Тăрсам, Мазепа. Çутăлать“.
Анчах старикĕн ыйхă тарнă,
Тахçантанпах вăл çывăрман;
Ун чĕрине усал чир—мурлă
Кышлать, кышлать, тӳсме çук хурлăх;
Ăна халь йывăр сывлама.
Чĕнмесĕр, ут вăл йĕнерлет.
Сиктерчĕ корольпа пĕрле.
Тискеррĕн ялкăшать ун куçĕ
Çĕршывĕнчен уйăрăлуçăн.

Иртет çĕр çул. Мĕскер хăварчĕç
Çав вăйлă, танлă арçынсем—
Хĕрӳллĕ те патвăр çынсем?
Вĕсен саманисем ăсанчĕç.
Куçран çухалчĕçĕ, пытанчĕç
Пур тертленӳ-çĕнтерӳсен
Тар-шурлă, юнлă йĕрĕсем.
Вăрçăпала çĕкленнĕ çамрăк
Патшалăхра—пĕр эс кăна

Хăпартрăн темĕн çÿллĕш палăк,
Полтава паттăрĕ, хăвна.
Çунатлă çиларманĕсем
Каркаланса пÿлсе ларан
Бендер хули йĕри-тавра,
Мăн мăйракаллă буйволсем
Таптанă кивĕ масарта
Пур ишĕлчĕк юлашкисем—
Мăкланнă виçĕ картлашка—
Швед корольне асилтерсе
Выртаççĕ хальччене вĕсем.
Çав чул картлашкасем çинчен,
Килти тарçисемпе кăна,
Вăл тĕрĕк çарĕпе иккен
Кĕрешнĕ харсăр чăн-чăнах;
Юлашкинчен вара—хĕçне
Пăрахнă вăл бунчук умне.
Унта салхуллă çулçÿревçĕ
Тупаймĕ гетман тăприне:
Мазепана аса илмеççĕ,
Тĕлне те маннă виллинне.
Çулталăкра пĕр хут кăна
Чиркÿсенче кĕрлет ун ячĕ:
Ылханлă сасăпа ăна
Леш тĕнчере асап сунаççĕ.
Анчах хĕн кăтартса вĕлернĕ
Ик çын тăпри—пур халиччен:

Вĕсен ӳтне-пӳне иккен,
Сăвапла авалхи çынсен
Шутне кӳртсе, чиркӳ хӳтленĕ.[34]
Диканькăра хĕрсе шавлаççĕ
Тусем ӳстерне юмансем;
Пуç хунă мăн аслашшĕсен
Асапĕсем çинчен вĕсем
Ачин ачисене калаççĕ.
Анчах инкеклĕ хĕр пирки...
Никам та, ним те шарламаççĕ:
Ун терчĕ, ун шăпи-тӳпи,
Ун вилĕмĕ—пиртен сĕм касăн
Хура чаршавĕпе хупланнă.
Хăшчух кăна бандура çакнă
Украйнăн суккăр юрăçĕ,
Ялта пур халăх умĕнче
Ват гетман юррине юрлуçăн,
Çав çылăхлă хĕре ятран
Асăнкалать кăшт хушăран;
Казак-тавраш хĕрипăрасăн
Чечен чĕрисене вара
Хурлантарса вăл хăварать.

Пушкин асăрхаттарнисем

1. Василий Леонтьевич Кочубей—аслă судье, хальхи графсен мăнаслашшĕсенчен пĕри.

2. Хутор—хула тулашĕнчи çурт.

3. Кочубейĕн темиçе хĕр çитĕннĕ, вĕсенчен пĕри Мазепапа пĕртăванăн ывăлне—Обидовские качча кайнă. Кунта асăнаканнин чăн ячĕ Матрена пулнă.

4. Мазепа чăнласах та хăйĕн хреснай хĕрне çураçма хăтланнă, анчах ăна паман.

5. Халăх халапĕ тăрăх—Мазепа хăй темиçе юрă шухăшласа хывнă имĕш: çынсем вĕсене ку таранччченех юрлаççĕ. Кочубей те хăйĕн доносĕнче пĕр патриотла такмак пирки,—ăна Мазепа çырнă,—тесе асăнать. Çав такмак историшĕн çеç те мар паха япала.

6. Бунчукпа булава—гетман тивĕçне пĕлтерекен паллăсем.

7. Байронăн „Мазепине“ пăхăр.

8. Дорошенко—авалхи Малороссия паттăрĕсенчен пĕри, вырăс патши влаçĕпе килĕшмен хаяр тăшман.

9. Григорий Самойлович—1-мĕш Петр патшана ларсанах Çĕпĕре янă гетманăн ывăлĕ.

10 Симеон Палей—Хвастоври полковник, маттур юланутçă. Мазепа айăпланă тăрăх ăна, казаксене хăй ирĕккĕн хĕтĕртсе пăтăрмах тунăшăн, Енисейска пуç янă пулнă. Гетман шведсене сутăнсан, унăн ĕмĕрхи тăшманне—Палее те калла тавăрнă. Палей вара Полтава вăрçинче патша майлă çапăçнă.

11. Костя Гордеенко—Днепр хыçĕнчи казаксен кошевой атаманĕ. Кайран вăл XII-мĕш Карла сутăннă. 1708-мĕш çулта ăна тыткăна илсе пуçне каснă.

12. Лифляндие 20.000 казак янă пулнă.

13. Мазепа пĕр çырăвĕнче Кочубей çинчен—вăл мăнкăмăллă, ăна пысăк ăслă арăмĕ тытса тăрать, тесе ӳпкелешет.

14. Искра—Полтаври полковник, Кочубейĕн юлташĕ, унпа пĕр шухăшлă пулса пĕрлех вилнĕскер.

15. Езуит Заленский, княгиня Дульская. тата Болгарирен хăвалаca кăларнă темĕнле пĕр архиепископ—Мазепан ултав-улмаш ĕçĕнче чи витĕмлĕ агентсем пулнă. Архиепископĕ, ыйткалаканла тумланса, Польшăран Украйнăна, Украйнăран Польшăна каçа-каçа çӳренĕ.

16. Гетмансен манифестне универсал, тенĕ

17. Филипп Орлик—аслă тиек, Мазепăн чи çывăх çынни. Мазепа вилсен (1710) ăна XII-мĕш Карл Малороссия гетманĕн пушă титулне панă. Каярах Орлик Магомет тĕнне куçнă, вара Бендер хулинче 1736-мĕш çулалла вилнĕ.

18. Булавин—Дон казакĕ, çав вăхăталла пăлхав хускатнăскер.

19. Вăрттăн секретарь. Шафиров тата граф Головкин—Мазепа хутне кĕрекенсем, ун тусĕсем. Донос çыраканçене хăрушă судпа вĕлерттерни, тĕрĕссипе, çавсем çине ӳкет.

20. 1705-мĕш çулта. Б. Каменскийĕн „Малороссия Историйĕ" çумне хушса кăларнă асăрхаттарнине пăхăр.

21. Йăнăççăр вăрçăпа Крыма пырса сĕкĕнсен—Казы Гирей Мазепăна, хăйпе пĕрле пулса, вырăссен çарне тапăнма сĕннĕ.

22. Хăйĕн çырăвĕсенче вăл—донос çыракансене ытла çăмăл асапларĕç тесе кăмăлсăрланнă, шавах вĕсене вĕлерттерме ирĕк ыйтнă; хăйне—йĕркесĕр ватăсем элеклесе хур турнă Сусаннапа, Головкин графа—Данилл про, окпа танлаштарнă

23. Кочубей ялё.

24. Вёлермелле тунă Кочубее тетман çарёнче тепĕр хут асапланă. Мĕскĕн этемĕн явап-хуравĕсем тăрăх—унран хăй пытарнă мулĕ çинчен ыйтса тĕпчени палăрать.

25. Сердюк тавраш—гетмансен хăйсен укçипе тытса тăракан çарçыннисем.

26. Петĕр ĕмпӳ яланхи пекех хăвăрт тавçăрса илсе хăватлă меслетсем тупнă пирки, Украйнă Расçеех пăхăнса юлнă.

1708 çулхи ноябрĕн 7-мĕш кунĕнче казаксем, Патша Указĕ тăрăх, хăйсен йăлипе ирĕклĕн сасăласа Стародубри полковника—Ив. Скоропадские гетмана суйларĕç.

8-мĕшĕнче Глухов хулине Киеври, Черниговри тата Переяславльри архиепископсем пычĕç.

9-мĕш кунне çав архиерейсем Мазепăна пур халăх умĕнче ылханчĕç; çав кунах çав сутăнчăк Мазепан кĕлеткине те илсе тухрĕç; мăйĕнчен бантпа çакнă кавалерине хывса, çав кĕлеткене палач аллине пăрахрĕç. Палач ăна кантăрапа кăкарса урам тăрăх, площадь тăрăх вилĕм кашти патнех сĕтĕрсе çитерчĕ, вара карăнтарса çакса хучĕ.

Глуховрах 10-мĕшĕнче Чечельпа ытти сутăнчăксене те вĕлерчĕç..." (Аслă Петĕрĕн журналĕ).

27. Палач—çын пуçне касакан, асаплантарса вĕлерекен.

28 Чечель, Меншиков князьăн çарне хирĕç тăрса, Батурин хулине памасăр хытă çапăçнă.

29. Дрездена, Август-король патне, кайнă вăл. Вольтерăн „XII-мĕш Карл Историне" пăхăр.

30. Ах, аслă патшамăр! бомба! —„Бомбăн эпĕ каласа сыртаракан çыру çумĕнче мĕн ĕçĕ пур? Çыр"—тенĕ пĕрре Карл, Ку чылай каярах пулнă.

31. Çĕрле Карл, пирĕн лагере сăнама хăй тухса, вут тавра ларакан казаксем патне пырса лекнĕ. Вăл тӳрех вĕсем çине сиктерсе кĕнĕ те, пĕр казака хăй аллипех персе пăрахнă. Казаксем ăна хăйне виççĕ пеме ĕлкĕрнĕ, уринчен лектерсе хытă амантнă.

32. Меншиков княçăн йĕркеллĕ хушăвĕсемпе ĕçĕсене пула, тĕп çапăçура кам çĕнтересси малтанах паллă пулнă. Çапăçу икĕ сехете те пырайман. Мĕншĕн тесен (тет Аслă Петĕрĕн журналĕ) никам çĕнейми хисеплĕ шведсем часах çурăмĕсене кăтартрĕç; пирĕн çар хĕстернине тӳсеймесĕр, тăшман çарĕ питех хыттăн арпашăнса чакрĕ. Çав кун Меншиков князь-генерал пысăк пулăшу кӳнĕшĕн, Петĕр ăна кайран чылай айăпĕсемшĕн каçарнă.

33. Хавасланнă вырăс патши, хăй саваннине пытарма тăрăшмасăр, тыткăна лекнĕ сынсене вăрçă хирĕнчех хапăл туса йышăннă. Тыткăнри шведсене ун умне ушкăнĕ-ушкăнĕпе илсе пынă, патша минутсеренех ыйтнă „Аçта-ха манăн тăванăм Карл?“— тенĕ.. Вара курка тулли эрех йăтса, вăл каланă: „Мана вăрçă ăсталăхне вĕрентекенсен сывлăхĕшĕн ĕçетĕп!“ тенĕ.—Кама тивет-ши çав тери пысăк чыслă ят?—тесе ыйтнă Реншильд. „Сире, хисеплĕ швед генералĕсем!—тенĕ патша. „Апла пулсан, аслă патшамăр, эсир ытла та пархатарсăр: вĕрентекенĕрсене, сума сумасăрах, çĕмĕрсе тăкрăр“, (Вольтер).

34. Пуç татнă Искрапа Кочубейăн ӳт-пӳне хурăнташĕсен аллине панă, вара вĕсене Киев лаврне пытарнă; вĕсен тупăкĕ çийĕнчи чул çине çакнашкал çыру касса çырнă:

„Пире пĕлмен иртен-çӳрен, эс çакăнта тăрсассăн,
Кам шăмĕ-шакĕ выртнине пĕлмешкĕн тăрăшсассăн,—

Эпир сана калаймăпăр: хушмасть чĕнмешкĕн вилĕм.
Çак чул çине пăхсассăн эс—хăвах чухласа илĕн.
Чăнлăхпала Патшамăра ытарайманшăн—пирĕн
Хĕн-хурăн йӳçĕ куркине тĕппи ĕçмешкĕн тиврĕ.
Усал Мазепа пуртăпа пуçăмăра кастарчĕ,
Пĕр айăпсăр чунăмăрах асапласа кăларчĕ.
Пур чурине тэ ĕмĕрлĕх кунçул пӳрен тур амĕш,
Çак вырăнта хӳтĕлесе, пире пиллерĕ кавăç.
1708-мĕш çулта, июль уйăхĕн 15-мĕш кунĕ, Çар халăхĕ умĕнче, Белая Церковь хыçĕнчи Борщаговецпа Ковшевой хирĕнче пуçне каснă тӳрĕ чунлă Василий Кочубей—аслă судье; Иоанн Искра—Полтава полковникĕ. Вĕсен ӳчĕсене июлĕн 17-мĕшĕнче Киева илсе пынă, çав кунах Печерская текен таса чиркӳре çак вырăнта пытарнă".

59806

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

Редактор С. Эльгер.

НТ 01015. Подписано к печати 11—I—1947 г.
Об'ем 2,5 п/л Зак. № 648. Тираж 5000 экз.

Отпечатано в Цивильской типогр. Управл. Полиграфпром. при Совете Министров Чувашской АССР

АСАРХАНĂ ЙĂНĂШСЕМ

Стр.	Йĕрке	Пичетленнĕ	Вуламалла
13	3 çӳлтен	Кам асĕ	Кам анĕ
45	2 „	чараймĕ	чăтаймĕ
72	7 аялтан	пагвăр	патвар
74	5 çӳлтен	Тусем	Туссем

А. С. Пушкин—*Полтава.*

Цена 2 р. 50 к.

А. С. ПУШКИН

ПОЛТАВА

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ * 1947